25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 26 КĔÇНЕРНИКУН 21(6258) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ПРОПАГАНДĂПА АГИТАЦИ ĔÇНЕ—ÇӲЛЛĔ ПУСĂМА

Совет Информаци Бюровĕ хаваслă хыпарсем пĕлтерет. Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ Кăнтăр-хĕвеланăç, Кăнтăр, Дон, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Калинин, Волхов тата Ленинград фрончĕсенчи боецсемпе командирсене тата политработниксене вĕсем Сталинград патĕнче, Дон çинче, Çурçĕр Кавказра, Воронеж патĕнче, Великие Луки районĕнче, Ладога кӳллинчен кăнтăрарахра нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тата вĕсен союзникĕсене—румынсене, итальянецсене, венгерецсене çĕнтернĕ ятпа ырă сунса саламланине, гитлерла çарсене Сталинград патĕнче çапса аркатнă, Ленинград блокадине татнă тата Кантемировка, Беловодск, Морозовский, Миллерово, Старобельск, Котельниково Зимовники, Элиста, Сальск, Моздок, Нальчик, Минеральные Воды, Пятигорск, Ставрополь, Армавир, Валуйки, Шлиссельбург, Воронеж хулисене тата ытти хуласемпе халăх пурăнакан пиншер пунктсене ирĕке кăларнă командованипе паттăр войскăсене тав тунине тăван çĕршыври пĕтĕм халăх пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ.

Халĕ, çак хĕрӳллĕ кунсенче, пропагандăпа агитаци ĕçне боевой задачăсем ыйтнă пек, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене аркатса тăкас, Совет çĕрне ирĕке кăларас, фронта ытларах пулăшу парас задачăсене пăхăнтарса туса пымалла. «Йăлтах фронт валли, йăлтах ирсĕр тăшмана аркатса тăкма!»—çакă вăл агитаципе пропаганда ĕçĕнчи тĕп лозунг. Сталин юлташ çĕршыври мĕнпур ĕçе — хуçалăх, политика, культура тĕлĕшĕнчи ĕçсене çак лозунгпа туса пыма хушать.

Вăрçă агитаципе пропаганда ĕçне тĕпрен улăштарса çĕнетме хушрĕ. Халĕ совет çыннисен политикăллă активлăхĕ ӳсрĕ. Халĕ пирĕн кашни ĕççынни политик пулса тăчĕ, кашни ĕççынни вăрçă кăларса тăратнă ыйтусене, çарпа тактика, стратеги ыйтăвĕсене сӳтсе-явать. Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене вулана чухне кашниех карттă умне пырать, фронтри ĕçсем мĕнле пулса пынипе карттă тăрăх тĕпчесе вĕренет, Хĕрлĕ Çар çитес вăхăтрах ăçтан пырса çапассине шутласа пăхать. Пĕр сăмахпа каласан, вăрçă кунĕсенче совет çыннисен тавракурăмĕ анлăланчĕ, вĕсем политикăллă ыйтусемпе ытларах интересленекен пулчĕç. Вĕсене халĕ çĕршыври лару-тăру çеç мар, тĕнчери лару-тăру та пысăккăн интереслентерет. Пирĕн пропагандăпа агитаци ĕçĕн работникĕсен кашни ĕççыннине çĕршыври лару-тăру çинчен тата çав лару-тăрусем кăларса тăратнă задачăсем çинчен анлăн пĕлтерсе тăмалла.

Пирĕн Чăваш республикинчи малта пыракан пропагандистсемпе агитаторсем çапла ĕçлеççĕ те. Сталин юлташăн вăрçă кунĕсенчи доклачĕсемпе приказĕсене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи боевой эпизодсене тата ыт. те ăнлантарса, вĕсем ĕççыннисен анлă массине партипе правительство промышленноçпа транспорт тата ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама, фронта вăйлăнрах пулăшма мобилизацилесе пыраççĕ.

Ку тĕлĕшпе, сăмахран, танксемпе самолетсем тума укçа пухас ĕçе илсе кăтартма пулать. Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, пирĕн орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума кĕске вăхăт хушшинчех 31.550.000 тенкĕ укçа пухса, ун çинчен юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташа пĕлтернĕччĕ. Сталин юлташ янă саламлă телеграммăна чăваш халăхĕ пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Пирĕн пропагандистсемпе агитаторсем ун çинчен ĕççыннисене тивĕçлĕн ăнлантарса пачĕç.

Çапла вара, республикăри ĕççыннисем Сталин юлташăн саламĕ хыççăн çак ĕç валли татах 24 миллион та 50 пин тенкĕ, пĕтĕмпе вара 55 миллион та 600 пин тенкĕ пухса государство банкне хыврĕç. Çакăн çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ Сталин юлташа пĕлтерчĕ. Сталин юлташ Чарыков юлташ патне янă телеграммăра Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республикинчи ĕççыннисене, малтан 31.550.000 тенкĕ пухнисĕр пуçне танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума татах 24.050.000 тенкĕ пухнăскерсене, кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар фонде 120.600 пăт тырă хывнă колхозниксемпе колхозницăсене, тăванла салам ячĕ тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ.

Сталин юлташ Чăваш республикинчи ĕççыннисене иккĕмĕш хут саламланинче, вăл Хĕрлĕ Çар ячĕпе иккĕмĕш хут тав тунинче, паллах, пирĕн агитаторсемпе пропагандистсен пархатарлă ĕçĕн паллă тӳпийĕ пур.

Анчах, тӳрех калас пулать, хăшпĕр çĕрте вăрçă пуçланнăранпа пропагандăпа агитаци ĕçĕ вăйсăрланни сисĕнет. Хăшпĕр парти организацийĕсем политикăллă ĕçе ĕççыннисем хушшинче туса пырассине чылай вăйсăрлатрĕç. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пунктĕнчи пуçламĕш парторганизаци вăрман касакансем хушшинче нимĕнле агитациллĕ-пропагандăллă ĕç те туса пымасть. Унта вăрман касакансем хушшинче ĕçлеме Кудряшова, Здорова агитаторсене «çирĕплетнĕ». Кудряшова юлташ пĕлтĕрхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа паянхи кунччен мĕнпурĕ те 2 калаçу çеç ирттернĕ. Здорова юлташ пĕр калаçу та ирттермен. Парторганизацин агитаци ĕçне туса пымалли план çук; унта агитаторсемпе калаçу ирттерекенсене пухса пĕр канашлу та, пĕр семинар та ирттермен. Унти ĕçсем сӳрĕк пулса пыни вăрман касакансемпе вăрман турттаракансем хушшинчи политикăллă ĕç çине çакнашкал тимсĕрле пăхнинчен килет те ĕнтĕ.

Пропагандăпа агитаци работникĕсен нумай пулмасть пулса иртнĕ республикăри канашлăвĕ пропагандăпа агитаци ĕçĕ чылай çĕрте тивĕçлĕ пусăмра маррине палăртрĕ. Хăшпĕр çĕрте ĕççыннисем хушшинчи политикăллă ĕçе хуçалăхри задачăсемпе таччăн çыхăнтармасăр туса пыни, агитаципе пропаганда ĕçне сăмах вĕççĕн çителĕксĕр туса пыни сисĕнет. Ертсе пыракан работниксем партипе комсомолăн горкомĕсемпе райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен работникĕсем ĕççыннисем хушшинче докладсемпе лекцисем хутран-ситрен çеç тăваççĕ. Хăшпĕр агитаторсемпе пропагандистсем ĕçри сӳрĕклĕхе асăрхаççĕ пулин те, ăна пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ, «айккинчен сăнаса тăракансен» вырăнне йышăнаççĕ. Агитаципе пропаганда ĕçĕн работникĕсем çакна ăнланса илме тивĕç: агитациллĕ-пропагандăллă ĕçĕн пахалăхне ĕççыннисем хушшинче ирттернĕ докладсемпе калаçусен хисепĕ тăрăх мар, предприятири, колхозри тата учрежденири производствăллă çитĕнӳсем тăрăх хаклаççĕ.

Вăрçă кунĕсенче хăшпĕр парти организацийĕсем агитациллĕ-пропагандăллă ĕçе туса пырас тĕлĕшри пĕтĕм майсемпе тивĕçлипе усă курма тăрăшмаççĕ-ха. Сăмахран, районсенчи радиоузелсене илер. Вăрçăччен пирĕн республикăри хăшпĕр районсенче юлашки хыпарсене тăтăшах радио тăрăх паратчĕç. Ку ĕç халĕ сӳрĕкленни сисĕнет. Ялсенче радиоприемниксем начар ĕçлеççĕ. Çавна пула республикăри чылай ялсенче радио тăрăх паракан хыпарсене пĕрле пухăнса итлессине начар организацилеççĕ. Ку ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Пропагандăпа агитаци ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пымалла.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолне Стэндли господина тата Великобритани Ĕçĕсен Повереннăйне Баггаллей господина йышăнни

Январĕн 26-мĕшĕнче каçхине Кремльре СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Сталин юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолне Стэндли господина тата Великобритани Ĕçĕсен Поверенннăйне Баггаллей господина йышăннă, йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ та пулнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Дон фронтĕнчи войскăсем, Сталинград районĕнче çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступлени туса пырса тата хаяр çапăçусенче тăшманăн питĕ вăйлă тĕреклетнĕ йышлă укреплениййĕсене çĕнтерсе, çав çавăрса илнĕ группировкăна, тĕпрен илсен пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă икĕ пысăк мар группине çеç пĕтерсе тăкман-ха, вĕсенче 12 пин çынран ытла мар, çав группăсенчен пĕри Сталинградран çурçĕртерехре, тепри Сталинградăн вăтаçĕрĕнчи пайне сывăхрах тăрать. Тăшманăн çав икĕ группи пĕтĕççсех, вĕсене пĕтерсе тăкасси ик-виç куна çеç пырать.

Январĕн 26-мĕшĕнче **Кăнтăр-хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Волхов** тата **Ленинград** фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 11 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 8 складне сирпĕнтерсе янă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине икĕ батальон таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче совет войскисем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, уйрăм участоксенче тăшманăн пырса çитнĕ резервĕсен контратакисене сирсе тăнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче Н-ски соединенин боецĕсем нимĕçсен пехотипе танкĕсен йышлă вăйĕсен икĕ питех те хаяр контратакине сирсе янă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 14 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Грузсем тиенĕ 65 автомашинăна тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем малалла кайса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малалла тапăнса пынă, вĕсен пĕр пайĕ хăйсем йышăннă рубежсене тĕреклетнĕ тата противникăн контратакисене сирсе тăнă. Н-ски соединенин чаçĕсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан 5 пункта йышăнса илнĕ. Нимĕç пехотин икĕ ротине, тăшманăн пĕр танкне тата хăй тĕллĕн перекен туппине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Морозов юлташ ертсе пыракан танкистсем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 50 çынна тыткăна илнĕ. 40 автомашина, велосипедсен складне, çар пурлăхĕ тиенĕ 3 поезда, тумтирсен, горючи, боеприпассен тата запаслă чаçсен склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем артиллерипе танксем пулăшса пынипе тăшмана хирĕç тăмалли виçĕ паха узелран хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 виллине çити, персе çĕмĕрнĕ 9 танкĕ тата 37 автомашини вырткса юлнă. 170 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Хĕçпăшалсемпе боеприпассен пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем çапăçса пырса малалла кайнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пысăк пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем оборонăн темиçе линине туса хунă, çав пункт патне пымалли вырăнсене минăласа хунă. Совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем питĕ вăйлăн персе тăрса тăшманăн оборонине çĕмĕрнĕ. Пирĕн боецсем артиллерин малалла куçса пыракан вут-çулăмĕ хыççăн пырса тăшманăн оборонине шала кĕрсе кайнă та халăх пурăнакан çав пункта тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Гвардеец-кавалеристсем малалла кайса тăшманăн пехотине пĕр батальона çити тата утлă çарăн икĕ эскадронне аркатса тăкнă та халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен отрячĕ Германирен нумаях пулмасть килнĕ фашистла помещикăн пысăк имениие тапăннă. Совет патриочĕсем 85 гитлеровеца вĕлернĕ, 22 трактора пĕтерсе тăкнă, тырă хунă 3 склада тата нимĕçсем халăхран туртса илнĕ сӳспе утă склачĕсене çунтарса янă. Украинăра кĕрешекен тепĕр отрядри партизансем чугунçулсене минăласа хунă. Минăсем çине пырса кĕрсе, нимĕçсен 3 çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Аяларахра Ростов облаçĕнчи Каргинская станцинче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен тата çаратса çӳрени çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Гитлерла бандитсем вырăнти çынсене çаратса, тустарса пĕтерчĕç. Нимĕçсем 1.296 пуç выльăха хăваласа кайрĕç, 5 пин пуç кайăк-кĕшĕке пĕтерчĕç, 100 яхăн тĕрлĕ ялхуçалăх машинисене юрăхсăра кăларчĕç, икĕ шкула çĕмĕрчĕç, колхоз çурчĕсене çунтарса ячĕç. Нимĕçсем «Ленинский путь» тата «Степан Разин» колхозсене тата вĕсен колхозникĕсене кӳнĕ сиен 11,5 миллон тенкĕрен те иртсе каять. Гитлерла палачсем станицăри нумай çынна персе вĕлерчĕç, нумай арçынпа хĕрарăма каторгăлла ĕçе хăваласа кайрĕç». Акта вырăнти çынсем Бурдеев, Тарасов, Вятченко, Филатов тата ыттисем те алă пуснă.

Январĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух сĕрле **Кăнтăр-хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Волхов** тата **Ленинград** фрончĕсенчи войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон фронтĕнчи войскăсем Сталинград районĕнче çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисен юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Н-ски часть нимĕçсен 669-мĕш пехотнăй полкĕн подразделенине тата штабне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 534-мĕш пехотнăй полкĕ хăйĕн пĕтĕм йышĕпех тыткăна парăннă.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малалла тапăнса пынă, вĕсен пĕр пайĕ тăшманăн контратакисене сирсе тăнă. Н-ски гвардейски часть нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă, 3 самолет, 4.000 авиабомба, 200 пичке бензин, 37 оруди, 54 пулемет, 24 противотанковăй пăшал, 5 тягач тата апатçимĕçсемпе ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн контратакине сирсе янă, унăн пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă хаяр çапăçура нимĕçсем 200 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата 2 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй соединени, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Тăшманăн çапса аркатнă чаçĕсенчен пирĕннисем çавăрса илнĕ темиçе группи хĕвеланăçнелле татса тухма хăтланнă. Кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн тăшман парăннă. Нимĕçсен 1.463 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски соединени халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем, ăнăçлăн малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем Армавир районĕнче çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: орудисем—200 яхăн, минометсем—137, пулеметсем — 127, винтовкăсем—2.000, автоматсем—229, противотанковăй пăшалсем—263, снарядсем—2.000 авиабомбăсем — 8.000 тата авиабомбăсен икĕ складĕ, патронсем—100.000 тата боеприпассемпе тĕрлĕ çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем нимĕç батальонне çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 виллине яхăн выртса юлнă. 120 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Карело-Финн ССР-ĕнче кĕрешекен партизансен виçĕ отрячĕ январь варринче тăшманăн халăх пурăнакан виçĕ пунктри гарнизонне пĕр вăхăтрах атакăланă. Совет патриочĕсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлернĕ, 5 оруди, 3 миномет, 2 радиостанци тата прожектор установкине пĕтерсе тăкнă, боеприпассемпе апатçимĕçĕн темиçе складне сирпĕнтерсе янă е çунтарса янă.

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Тартмашевка станцийĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕçсем хăйсем чакас умĕн рабочисен-железнодорожниксен пĕр ушкăнне арăмĕсемпе, ачисемпе пĕрлех общежитие хăваласа пухнă та вĕсене унта тискеррĕн асаплантарма тытăннă. Гитлерла палачсем сигналиста Дмитрий Сафонова, унăн арăмне, икĕ хĕрне тата ывăлĕн ывăлĕсене: виçĕ çулхи Николая тата çулталӑк çурăри ачана, сигналиста Петр Ткачева тата унăн арăмĕпе ывăлне, сигналиста Федор Чистякова тата унăн арăмĕпе 4 çулхи хĕрне вĕлернĕ. Станцире пурăннă мирлĕ çынсен тепĕр ушкăнне—20 çынна—фашистла ирсĕрсем чугунçул будкине хăваласа кĕртнĕ те унта вĕсене персе вĕлернĕ». Акта Гончарова, Слитнова, Бондаренко, Королева, Швецова тата ыттисем те алă пуснă.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынипе тата Эсир, Сталин юлташ, танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тума укçа пухнă колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене янă салампа хавхаланса, Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă республикинчи комсомолецсемпе çамрăксем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума кĕске вăхăт хушшинчех 6 миллион тенкĕ укçа пухса Госбанка хыврĕç. Укçа пухасси малалла пырать, вăл совет çамрăкĕсен патриотизмне тата совет çамрăкĕсем большевиксен партине чунтан парăнса ĕçленине уççăн кăтартса тăрать. Сире, Сталин юлташ, çакна шантарса калатпăр: Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксем тăшмана çапса аркатассипе пĕтерсе тăкассине хăвăртлатма мĕн кирлине пурне те тăвĕç. Пирĕн республикăри комсомолецсемпе çамрăксенчен, Иосиф Виссарионович, комсомолла-çамрăкла салам тата Сире çирĕп сывлăхлă пулма, нумай, нумай çул пурăнма чунтан-чĕререн суннине йышăнăр.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ П. МИХАЙЛОВ.

Шупашкар, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарьне МИХАЙЛОВ юлташа

Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республикинчи комсомолецсемпе çамрăксене, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 6 миллион тенкĕ укçа пухса панăскерсене, манран хĕрӳллĕ салам калăр тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тăвăр.

И. СТАЛИН.

Комсомолецсемпе профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Уйкас Юнтапари „Новая жизнь“ колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хăйсем валли кашниех пĕрер мăшăр йĕлтĕр юсаса е çĕнĕрен туса хатĕрленĕ. ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ—фронтовик С. Иванов юлташ ертсе пынипе, колхозра 45 çамрăкран йĕлтĕрçĕсен командисене организациленĕ. Халĕ командăсенче йĕлтĕрлĕ тренировкăсем туса ирттереççĕ: чăнкă вырăнсенчен йĕлтĕрпе ярăнса анма тата сикме, тарăн кĕрт урлă туясăр çӳреме вĕренеççĕ. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв тĕлне пур йĕлтĕрçĕсем те ГТО значокĕн хĕллехи нормисене парса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Б. Шорников.

Паттăр воинсене ăшă тумтирсем ытларах хатĕрлесе парар!

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хĕрлĕ Çар наступлени тунипе хавхаланса, Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хамăрăн мухтавлă воинсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме пĕр кун хушшинче 25 тир пухрĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах фронтран аманса таврăннă красноармеецсем Г. Мироновпа Л. Краснов юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Н. Виноградов.

* * *

ЙĔПРЕÇ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем январĕн 25-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме 1.094 тир, 348 килограмм çăм пухрĕç. Кунсăр пуçне 33 мăшăр çăматă, 21 фуфайка, ваткăллă шароварсем 15, ăшă кĕпе-йĕм 105 мăшăр, 82 мулаххай, 87 мăшăр çăм чăлха, 100 мăшăр çăм алшиш, 178 питшăлли пухнă.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Дон, Çурçĕр-Кавказ, Воронеж, Калинин, Волхов тата Ленинград фрончĕсенчи войскăсене панă приказ тата Сталин юлташ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ патне янă саламлă телеграммăна ĕççыннисене ăнлантарса панă май, ку ĕç палăрмаллах вăйланчĕ.

Ф. Захаров,
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ытлашши тырра— Хĕрлĕ Çар фондне

ТĂВАЙ. Вăтаялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Елчĕк районĕнчи „Марс“ колхоз членĕсен пуçарăвне йышăнса, хăйсен хуçалăхĕнчи ытлашши тырра Хĕрлĕ Çар фондне хываççĕ. Вĕсем çак ĕç валли 150 пăт тыра пачĕç. Колхозниксем П. Козлов 6 пăт, А. Семенова 4 пăта яхăн, учитель Н. Масленников 3 пăт, кладовщик П. Андреев 3 пăт пачĕç. Колхоз хăйĕн фондĕнчен 300 пăт хыврĕ.

Г. Филиппов.

* * *

КАНАШ. Вăтакас-Татмăш ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан, „Париж Коммуни“ тата „Динамо“ колхозсем иртнĕ суракинче акса хăварнă оборона гектарĕсем çинчен пухса илнĕ тырра государствăна пачĕç. Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче нимĕçле-фашистла войскăсене аркатса тăкнипе тата ытти фронтсенче те вăйлă наступлени туса пынипе хавхаланса колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине оборона фондне хывма тытăнчĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем—180 пăт, „Динамо“, „Париж Коммуни“ колхоз членĕсем 90-шар пăт пухса хатĕрлерĕç.

Т. Турхан.

Тăшмана тăхланпа, вутпа çунтарать Хĕрлĕ Çар.

Хĕрлĕ Çара тырпулпа, укçа-тенкĕпе пулăшар.

Сталин юлташăн приказĕ çине уяв парнисем пухнипе ответлеççĕ

КАЛИНИНО, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандующийĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ чапла çĕнтерÿсем тунă фронтсенчи войсксене панă приказа пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Ку ятпа районри колхозсене савăнăçлă митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Сталин юлташăн приказне ăнлантарса пама районри партипе совет активне колхозсене кăларса ячĕ.

Юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, колхозниксем хамăрăн мухтавлă воинсем патне Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа парнесем ярса пама çак 2—3 кун хушшинче аш-какай, çу, табак, чăхсемпе хурсем, пăрçа, тулă çăнăхĕ, тăварланă купăстапа помидор, кишĕр, ĕрех чылай пухрĕç. Кампалти „Новый путь" колхоз (председателĕ Григорьев юлташ) 25 килограмм какай, 5 пăта яхăн тулă çăнăхĕ, 25 килограмм табак, 75 килограмм пăрçа, 5 литр ĕрех пухса районри склада лесрĕ. Çавăн пекех Шуркассинчи „Социализм" колхоз та 20 килограмм какай, 5 килограмм çу, 10 килограмм типĕтнĕ çĕрулми, 5 литр ĕрех пухрĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв парнисем пухас ĕç ытти колхозсенче те пысăк çĕкленÿпе пырать.

Ф. Романов,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Ирсĕр тăшмана хĕвеланăçнелле хĕссе пыракан мухтавлă воинсем патне Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа парнесем ярса парас ĕçе районри колхозсемпе колхозниксем пысăк хаваслăхпа хутшăнаççĕ. Сталин юлташ çапăçура уйрăмах паларнă фронтсенчи войсксене саламлакан приказа радио тăрăх илтнĕ хыççăн районри колхозсем 1500 килограмм какай, 450 килограмм тулă çăнăхĕ, 3 центнер пăрçа тата ытти парнесем чылай пухрĕç. Ку ĕçре Шемшер ялсоветĕнчи колхозсем уйрăмах активлăн хутшăнчĕç. „Çалтăр" колхоз 80 килограмм какай, „Красная звезда" колхоз 35 килограмм какай, 25 çăмарта пухрĕç. Шăмăш ялсоветĕнчи Водольянов ячĕпе тăракан колхоз та парнесем чылай кăларчĕ. Вăл 57 килограмм какай, 70 çăмарта, 3 пăт тулă çăнăхĕ пухрĕ. Боецсем патне Юрăковăри „Туçи" колхоз çу уйăхне пĕçернĕ 10 чăх, 5 килограмм çу, 40 çăмарта, Заводской ялсоветĕнчи „Красный Флот" колхоз 450 килограмм какай ярса параççĕ.

Т. Логинов.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв парнисем пухасси ĕçлекен районри комиссие ĕнерхи кун тĕлне колхозсенчен 464 килограмм какай, 20 килограмм пыл, хурсемпе чăхсем 33, тулă кĕрпи 3 пăт, 40 килограмм типĕтнĕ çĕрулми, 22 килограмм табак, 50 пăта яхăн тулă çăнăхĕ, 26 килограмм çу тата ытти ĕçрехсемпе премĕксем илме 11.000 тенкĕ укçа пухса панă. Ку ĕçре уйрăмах „Канаш" тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем аван организациленĕ. „Канаш" колхоз хатĕрленĕ парнесем шутĕнче 20 килограмм какай, 4 чăх, 20 килограмм çу тата çĕрулми, 80 килограмм тулă çăнăхĕ, махорка тултарнă 13 енчĕк т. ыт. те пур.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем пухас ĕç вăйлансах пырать.

А. Романов,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малта пыракан бригадăсем

ҪАНАШ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри бригадăсем хушшинче Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе пыракан ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртура котельщиксен Капелюха юлташ ертсе пыракан бригади лайăх ĕçлет. Бригада, ĕçе хăвăртлатмалли майсемпе усă курса, сменăри нормăна 3 хут ирттерсе тултарать. Бригадăн ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Столярсен Высоцкий юлташ ертсе пыракан бригади те Капелюха бригадинчен юлмасть. Ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешсе, бригада хăйĕн заданине кулленех 300 процента яхăн тултарса пырать.

Слесарьсен Ефимов юлташ ертсе пыракан бригадине январь уйăхĕнче пысăкрах задани панă. Бригада çак заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать: кулленхи нормăна вăтамран 250 процент тултарать.

Хĕрлĕ Çарăн фронтри пысăк çĕнтерĕвĕсем заводри рабочисемпе работницăсене ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем тума çĕклентереççĕ. Вĕсем, ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене сирсе, кунран кун тухăçлăрах ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

„ЧĂВАШ ЦИК" КОЛХОЗРИ ПЕК

СĔНТЕРВАРРИ. Пĕчĕк Маклашкинăри «Красная Армия» колхоз членĕсем Çĕрпÿ районĕнчи «Чăваш ЦИК» колхоз членĕсем чĕнсе калани вуланă, хыççăн çуракине хатĕрленме хĕрÿллĕн тытăнчĕç. Колхоз вăрлăхсене хатĕрлесе çитернĕ, вĕсене сортласа тасатнă, шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ. 14 центнер вăрлăхлăх пăрçана колхозниксем пĕрчĕн суйласа тасатнă. Январь уйăхĕнче уя 700 лава яхăн тислĕк кăларнă, 28 центнер кĕл, 19 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Халĕ колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕç пырать. 16 плуг, 6 сÿре тата сеялкăсене юсаса лартнă.

Н. Константинов.

7 колхоз уйăхлăхăн планне пурнăçларĕç

ИШЛЕЙ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пырса 1943 çулти çуракине вăйлăн хатĕрленеççĕ. Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăх пуçланнăранпа колхозсем хăйсен уйхирĕсене пурĕ 56.659 лав тислĕк, 3.248 лав торф кăларчĕç. Çак вăхăтрах районра пурĕ 2.250 гектар çинче юр тытнă, 497 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 530 плуг юсаса лартнă.

Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăхăн планне районри 7 колхоз срокчен пурнăçларĕç. Хĕрлĕ Çар, отечественнăй вăрçă фрончĕсенче куллен çĕнĕрен те çĕнĕ тата пысăк çĕнтерÿсем туса пыни колхозниксене ырми-канми ĕçлеме хавхалантарать. 1943 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн колхозниксем çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлеççĕ.

«Большевик» колхоз членĕсем кĕске вăхăт хушшинчех 142 центнер вăрлăхлăх тырра тасатса сортласа хучĕç, 15 плуг юсарĕç, уя 390 тонна тислĕк кăларчĕç, 50 центнер кĕл, 30 центер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç. Çавăн пекех «Агроном», «Осоавиахим» тата ытти нумай колхозсем те çуракине хатĕрленес ĕçе пысăк çĕкленÿпе туса пыраççĕ. «Осоавиахим» колхоз икĕ эрне хушшинче 154 центнер вăрлăхлăх тырра тасатса акма хатĕрлесе хучĕ, вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăхăн планне срокчен тата ирттерсе пурнăçларĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Гордеев тимĕрçĕн пуçарăвĕпе

ЕТĔРНЕ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри çĕрĕç пайĕ иртнĕ кунсенче колхозсенчи тимĕрçĕсемпе калаçу туса ирттерчĕ. Колхоз тимĕрçисем умĕнче халь пĕр ыйту тăрать: колхозсен ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса çуракинче ĕçлеме хатĕрлемелле. Райçĕрĕç пайĕ çакна тимĕрçĕсене ăнлантарса пачĕ, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе тĕпренех вăйлатма тата ку ĕçе кая хăвармасăр туса пыма хушрĕ.

Халĕ районри 17 колхозра тимĕрçĕ лаççисем ĕçлеççĕ. Нумай тимĕрçĕсем Красноармейски районри „Янмурзино" колхозри Гордеев тимĕрçĕн примĕрепе хăйсен колхозĕнчи ялхуçалăх машинисене çеç мар, тата ытти колхозсен машинисене те юсама тытăнчĕç.

Уйрăмах нимĕç фашисчĕсем оккупациленĕ совет районĕсенчен куçса килнĕ тимĕрçĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Тимĕрçĕ Пегаев юлташ хăй пурăнакан Буденный ячĕпе тăракан колхозăн ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерне. Çакăн хыççăн вăл „Правда" колхозăн машинесене юсама тытăннă. Кунта та часах пур машинăсене те юсаса çитерет.

Тимĕрçĕсен хастарлă ĕçне пула районри колхозсенче паянхи куна 485 плуг, 85 сеялка юсаса лартнă, культиваторсемпе сÿресене пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтернĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем—çуракине хатĕрленес ĕçĕн организаторĕсем

ТАВАЙ. Комсомолăн Чÿтейри «Хурçă» колхозри пуçламĕш организацийĕ колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пырать. Е. Васильев, В. Чайкин, В. Банков агитаторсем бригадăсенче, фермăсенче, колхозниксен килĕсенче ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Кун хыççăн колхозра çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ. Колхоз агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене план тăрăх пурнăçа кĕртсе пырать. Январĕн 20-мĕшĕ тĕлне уя 2000 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре комсомолецсемпе çамрăксем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Кунсăр пуçне 74 центнер кĕл, 31 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Колхозница Феодосия Андреева хăйĕн килĕнчен 20 лав, Клавдия Чернова 15 лав, Ирина Смирнова 12 лав, Евгения Васильева 8 лав тислĕк тăкрĕç. Вырăнти удобренисене турттарнă çĕрте кулленех колхозри лашасен хисепĕнчен 20 процентчĕ ĕçлет.

Вăрлăхсем çитеççĕ. Халĕ 260 центнер сĕлĕ, 37 центнер пăрçа, 72 центнер тулă, 50 центнер пăри, 69 центнер ясмăк, 15 центнер кантăр вăрри сортласа хунă. Пурĕ 523 центнер вăрлăх сортласа хатĕрленĕ. Вăрлăхсене сортлас ĕçре М. Анисимов, М. Якимова, В. Белкова, А Баринова юлташсем нормăна 120—130 процент тултараççĕ. Комсомолец П. Куракин ертсе пыракан 3-мĕш бригада вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа пĕтернĕ.

Анчах районра çуракине хатĕрленес ĕçе пачах хутшăнман комсомол организацийĕсем те пур-ха. Амалăхри «Горьковская Коммуна» колхозра та çуракине хатĕрленес ĕç сÿрĕккĕн пулса пырать. Унти организацинче 9 комсомолец. Вĕсенчен чылайĕшĕ колхозра ĕçлемеççĕ. Колхоз уйра юр тытса хăварас, ялхуçалăх машинисене юсас, вăрлăхсене сортлас тĕлĕшпе юлса пырать. Апла пулин те комсомол организацийĕ (секретарĕ Н. Журавлев) çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхоза çителĕксĕр пулăшать. Çавăн пекех çуракине хатĕрленес ĕç Тушкилри «Хĕрлĕ Çар», Ямбулатри «Çăлтăр», Вăрманхĕрринчи «Хĕрлĕ Сормово», Тăвайĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозсенче те япăх пулса пырать. Комсомолăн нумай организацийĕсем колхозсене çуракине хатĕрлеме сахал пулăшаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешмеççĕ.

В. ИЛЬИН.

Ÿкерчĕк çинче: Боецсем тăшмана Сталинград хулинчен хĕссе кăлараççĕ.
А. КИРИЧЕВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

УЯ 15.964 ТОННА ТИСЛĔК КĂЛАРНĂ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, январĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа районри колхозсем уйхире 15 964 тонна тислĕк кăларчĕç. Çак вăхăтрах 46 тонна минераллă удобрени турттарса килнĕ тата 1.190 центнер кĕл, 467 центер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 603 гектар çинче юр тытнă.

Нумай колхозсем çуракине лайăх хатĕрленеççĕ.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уява çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнипе паллă тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Атнарти «Коминтерн» колхоз çак иртнĕ эрнесенче 25 центнер минераллă удобрени турттарса килчĕ, уя 665 тонна тислĕк кăларчĕ, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 80 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕ, 130 гектар çинче юр тытрĕ.

ШИПКОЛИН,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

—⊙—

1943 çулхи ĕçшĕн натуроплата параççĕ

ЭЛĔК. Районри хăшпĕр колхозсем 1943 ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене ăнăçлă туса ирттерессишĕн халех тăрăшаççĕ. Кăçал уйхир ĕçĕнче МТС машинисемпе туллирех усă курас шутпа МТС-а 1943 çулхи ĕçшĕн аванс шучĕпе натуроплата параççĕ. Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулхи ĕçшĕн МТС-а натуроплата тыррине сентябрь уйăхĕнчех парса татнă. Халĕ колхоз МТС ĕçĕшĕн авансра тырă парать. Хатĕрлев пунктне 17 центнер тырă леçнĕ те ĕнтĕ.

Çавăн пекех Сормварринчи ВКП(б) XVII съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз та МТС-ăн кăçалхи ĕçĕшĕн государствăна 16 центнер, Хирлепуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз 18 центнер тырă панă.

М. Кустиков.

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКА ЖУРНАЛĔ ХĔРЛĔ ÇАР НАСТУПЛЕНИ ТУНИ МĔН ТЕРИ ПАХА ПУЛНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью рипаблик» ятлă журнал паллă çар обозревателĕн Вернерăн статьине пичетленĕ, автор унта Хĕрлĕ Çар наступлени тунă пирки вăрçă малашне мĕнле пулса пырасси çинчен çырать.

Автор çапла çырать: Хĕрлĕ Çар наступлени туни пĕрлешнĕ çĕршывсен стратегине калама çук пысăк пулăшу пачĕ, вăл 1943 çулхи ĕçсемшĕн çĕнĕ майсем уçса пачĕ. Хĕрлĕ Çар тăвакан наступлени унăн боевой хăватне кăтартса пачĕ. Наступление Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса туса пыраççĕ, Хĕрлĕ Çар вăл тăшманăн пысăк ушкăнĕсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкмалли пысăк операцисене пурнăça кĕртме хăй хатĕррине кăтартса пачĕ. Çав наступлени тата вырăссем хăйсен стратеги планĕсене малашнехине курса тата лайăх тунине кăтартса пачĕ.

«Хĕллехи наступление Совет Союзĕ халлĕхе хăй пĕччен туса пырать-ха,—тесе çырать автор, —ăна союзниксем Çурçĕр Африкăра вăрçă операцийĕсем туса пырса кăштах пулăшса пыраççĕ. 1942 çулта Хĕрлĕ Çар хăйĕн союзник шучĕпе илнĕ обязательствисене ытлашшипех пурнăçларĕ. Хĕрлĕ Çар наступлени тунă вăхăтра союзниксем Европа континентĕнче наступлени пуçласа яни мĕн тери пысăк результатсем пама пултарнине тавçăрса илме пулать. Европăра Союзниксен стратегиллĕ задачи çакă пулса тăрать: Германие хăйне пырса çапнă хыççăн ура çине тăма памалла мар тата анлă наступлени пуçласа яма мĕнпур вăйсене пĕр çĕре пухса тăратмалла».

ШВЕЦИ ХАÇАЧĔ НИМĔÇ ВОЙСКИСЕНЕ ШВЕЦИ УРЛĂ КАÇАРНИ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Тротс Алльт» ятлă хаçат лайăх пĕлсе тăракан çынсенчен илнĕ çак даннăйсене пичетлесе кăларнă: нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене «отпускниксем» тесе Швеци урлă каçарса яраççĕ. Поездсем икĕ линипе пыраççĕ. Çакна ăнланмалла мар: нимĕç войскисене пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарнине мĕнле майпа «отпускниксем» кайни тесе калама пулать-ха?—тесе çырать хаçат.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. Тытăçу

Нумаях пулмасть мана Чечеткин шоферпа пĕрле К. станцине боеприпассем тиеме кайма тиврĕ. Хĕллехи такăр çулпа автомашина çăмăллăн чупать. Тин тухнă хĕвел, кабина кантăкĕ витĕр кĕрсе, куçа йăмăхтарать. Станцăран каялла тухнă чухне кăнтăрла иртни икĕ сехетчĕ. Васкамалла. К. станцинчен пирĕн чаçа çитме 90 çухрăм. Каçчен çитес пулать. В. шывĕ урлă каççан, нумай груз тиенĕ машинăна шофер сулахаялла тытса, вăрман çуммипе выртакан лаша çулĕпе майĕпен чуптарчĕ. Вăхăтран вăхăта таçта аякра снаряд çурăлни, пулеметран вĕçĕмсĕр персе тăни илтĕнет!

— Мăкăрлантаратпăр пулĕ,—терĕ Чечеткин мана пирус сĕнсе.

— Туртса ярăпăр,—терĕм эпĕ. Татах сăмах чĕнместпĕр.

— Чечеткин!

— Мĕскер?

— Э-ех, студент чухнехи пурнăçсем аса килеççĕ.

— Аса килеççĕ пулĕ те... Халь вăл шухăш мар ĕнтĕ. Фрицсене пĕтерер-ха, вара каллех тăван хуламăрсене таврăнăпăр.

— Çапах та... юратнă хĕрсене манма çук-çке...

— Чим-ха... Илтетни, кĕрлет, —терĕ Чечеткин машинăна чарса.

Эпир кабина алăкне уçса пăхрăмăр. Çÿлте, пирĕнтен инçех те мар, нимĕç çăханĕ явăнать. Ун çуначĕсем çинчен хура пăнчăсем уйăралаççĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ.. Часах парашютсем саралаççĕ.

— Аха, фриц... Нумай шухăшласа тăма вăхăт çук. Пирĕн закон—тăшмана ăçта тĕл пулан, çавăнтах ăна çапса хуçмалла. Анчах пирĕн, тылран фронта çÿрекенсксерсен, пĕр винтовка кăна.

— Никитин,—терĕ Чечеткин,—винтовкăна мана парса,—эсĕ—винтовкăпа кунта пулатăн, а эпĕ...

Шофер пĕр юман чукмар илчĕ те нимĕç парашютисчĕ анас тĕле чухласа чупрĕ. Акă пĕр фрицĕ çĕре анса çитрĕ. Çав вăхăтрах Чечеткин, ун патне чупса пырса, чукмара тÿрех фриц пуçĕ çине сулса ячĕ. Фриц виличчен хăй чĕлхипе темскер çуйăхкаларĕ, анчах нимĕн те ăнланса илме пулмарĕ. Чечеткин, фриц автоматне илсе, иккĕмĕш парашютист аннă тĕле чупрĕ. Вăл, темиçе хутчен автоматран вăрăм черетсем кăлара-кăлара ячĕ те, часах юр ăшне путса ман куçран çухалчĕ. Эпĕ унăн йăвашланнă сассине кăна илтрĕм.

— Никитин, пулăш,—терĕ вăл. Мĕн тумалла? Тăшман самолечĕ, хăйĕн парашютисчĕсем ăçталла вырнаçнине сăнаса, 400—500 метр çÿллĕшĕнчен пирĕн машина еннелле вĕçсе иртсе кайрĕ. Вăл машинăна асăрхаса илчĕ пулас, каялла çаврăнчĕ те грузовик тĕлне пикировка турĕ. Анчах бомба 10—15 метр аяккарахра çурăлчĕ. Унтан фашист çăханĕ ман тĕлте çаврăнса, татти-сыппиcĕр пулеметран пеме пуçларĕ. Шухăшласа тăма вăхăт çук. Винтовкăран самолет çине умлăн-хыçлăнах виçĕ хутчен персе ятăм. Самолет çÿлелле хăпара пуçларĕ. Унтан темĕн чĕтренсе илчĕ те, сывлăшра хура юпа евĕрлĕ тĕтĕм кăларса, çĕрелле тăрăнчĕ.

Поста пăрахма çук. Чечеткин тăмарĕ. Паллах, вăйлă аманнă пулмалла. Ун патнелле акă тăшман парашютисчĕ чупать. Вăл инçе те мар, манран 100 метрта кăна. Эпĕ ăна тĕллесе пĕр пуля ăсатрăм. çук, лекмерĕ. Çавтери тарăхса çитнипе иккĕмĕш пуляна та сая яма тиврĕ. Фашист çĕрелле тăрăнчĕ. Манăн тепĕр патрон çеç юлчĕ.

— Кайса пăхасах пулать юлташа, хуть те мĕнле пулсан та пулăшмалла. Эпĕ те Чечеткин патнелле чупрăм. Тăшманăн юлашки парашютисчĕ мана асăрхарĕ те автоматран татти-сыппиcĕр пере пуçларĕ. Чечеткин патне хырăмпа шуса çитрĕм. Унăнне икĕ аллине тăшманăн пульли витĕрех шăтарса тухнă тата сулахай урине амантнă. Эпĕ çитсенех вăл пуçне çĕклесе пăхрĕ те:

— Ой, Никитин, хăвăртрах çыхса яр, вара эпĕ машина патне кайăп, эсĕ икĕ мулкачне те тытăн, терĕ вăйсăр сасăпа.

— Эпĕ ĕнтĕ пĕр мулкачне анчах хăвартăм тата хурчкине те тытрăм, —терĕм эпĕ хирĕç тавăрса.

— Аван, питĕ аван,—терĕ вăл, савăнăçлăн куласшăн пулса, анчах хуралса çунса кайнă тутинче кулă пулмарĕ.

Кĕçех пирĕн тăшманпа хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Эпĕ Чечеткин чукмарпа çапса пăрахнă фрицăн автоматне илтĕм. Тăшман парăнмасть. Вăл окоп майлă шăтăка кĕрсе ларнă та, ун сывăхне пыма питĕ хĕн. Эпĕ çапах та, хырăмпа шуса, тăшман сывăхнех çитрĕм. Пуç урлă сăхă пульăсем шăхăра-шăхăра иртеççĕ. Гранатăна запал лартса ывăтма хатĕрлентĕм. Анчах ман фрица чĕрĕлле тытас килет.

— Фриц, тыткăна парăн!—тесе кăшкăратăп. Вăл татах та хытăрах пеме пуçлать. Граната ывăтас—вилсе каять. Манăн ăна чĕрĕлле тытас интерес пысăк.

— Фриц, тыткăна парăн!—кăшкăратăп татах. Çук, яхăнне те ямасть. Пĕр сехет хушши пулĕ тăхлан çăмăр çутарчĕ вăл, эпĕ те ун çине перетĕп. Юлашкинчен тÿсеймерĕм, граната ывăтрăм. Граната фрицран пĕр метр сулахаялла ÿкрĕ, тăшман шăпланчĕ. Хăвăртрах тăрса чупрăм. Унăнне сулахай хулне амантнă, бинтпа чĕркесе ларать.

— Фриц, тыткăна парăн!—тесе кăшкăртăм хыттăн. Вăл каллех автоматне илчĕ те ман çине перессишĕн пулчĕ пулас. Анчах эпĕ унăн автоматне прикладпа çапса ывăтрăм, вара тин аллине çĕклесе парăнчĕ.

Эпир çак çапăçу хирĕнче илнĕ трофейăсене тата аманнă фрица пуçтарса çыхса машина çине хутăмăр та, хамăр часть еннелле вĕçтертĕмĕр. Пулса иртнĕ ĕç çинчен командира каласа патăмăр.

Е. НИКИТИН.

2. Сталин юлташăн приказне пурнăçлатăп

Эпĕ 1924 çулта, Тăвай районĕнчи Тĕмер ялĕнче çуралса ÿснĕ. Иртнĕ çулхи август уйăхĕнче эпĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм. Хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Флота лекни—маншăн пысăк телей. Эпĕ малтанхи кунран пуçласах юратнă нарком Сталин юлташăн приказне пурнăça кĕртме —боевой техникăна тĕплĕн вĕренме тытăнтăм. Кĕске вăхăтрах самай çитĕнÿсем турăм. Хĕçпăшала лайăх вĕренсе çитсе, унпа пĕлсе усă курнăшăн мана хамăрăн чаçăн командирĕ тав турĕ. Халĕ ĕнтĕ эпĕ, чăваш ачи, çапăçу хирне тухма хатĕр. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн эпĕ пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕп.

Краснофлотец М. ВЛАДИМИРОВ.

3. Чаçри чăвашсем

Хĕрлĕ Çар ретне эпир нумаях пулмасть—иртнĕ çулхи август уйăхĕн вĕçĕнче кăна килтĕмĕр. Çак кĕске вăхăт хушшинчех эпир Сталин юлташăн 132-мĕш номерлĕ приказне тимлĕн пурнăça кĕртме тăрăшрăмăр—хамăрăн хĕçпăшала лайăх вĕренсе çитрĕмĕр. Пирĕн чăваш ачисем боевой хатĕрленÿпе дисциплина тĕлĕшĕнчен хамăр чаçра кăна мар, пĕтĕм округра мала тухрĕç. Сăмахран, Михайлов юлташ (Элĕк районĕнчен) гранатăна питĕ ăста ывăтать. Вунă секунда хушшинче 17 граната ывăтса, вĕсене те тĕл тивертет. Унăн паха опычĕпе чаçри мĕнпур боецсене паллаштарчĕç.

Пирĕн часть хамăр соединенин куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинчех тытса тăрать. Эпир çав ялавпа тивĕçлипех мухтанатпăр. Боевой хатĕрленÿшĕн пыракан социализмлă ăмăртура пирĕн подразделенири боец Иван Корчев мала тухрĕ. Вăл винтовкăран пĕр минута хушшинче 20 хут персе, пур пульăна та тĕл тивертет.

Кун пек тĕслĕхсем пирĕн чаçра татах та нумай. Вуншар чăваш ачисем орденлă Чăваш республикин ятне çÿлте тытаççĕ. Вĕсем пурте хăвăртрах фронта кайма, фашистсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатма хатĕр.

В. ЛАЗАРЕВ.

Шкул ачисем юр тытаççĕ

ЭЛĔК. Хирлеппуçĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. Нумаях пулмасть «Красный Октябрь» колхозри пионерсем, Е. Васильева учительница ертсе пынипе, гектар çурă çинче юр тытса хăварчĕç. Халĕ вĕсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ.

М. К.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чăваш АССР Госстрах Управленине квалификациллĕ работниксем кирлĕ: экономист, техник-строитель, секретарь-машинистка тата районсенче ĕçлеме—бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 10, Чăваш АССР Госстрах Управленийĕ.

Возвращайте посуду из-под водки и водочных изделий. Все продуктовые магазины и ларьки принимают в неограниченном количестве.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1210 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф, 6. 58. 84 п.